чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

10 /26416/№ Ытлари кун, 2014, кăрлач (январь), 21 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Коммуналлă пулăшусен хакĕсем çулталăкăн пĕрремĕш çурринче ӳсмеççĕ

***Кăрлачăн 20-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Правительствин членĕсемпе, влаçăн территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Чăваш Республикин Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн ертӳçи Иван Никитин 2013 çулта управляющи компанисем коммуналлă пулăшусемшĕн шутласа палăртнă йĕркене тĕрĕслени, вĕсен улшăнăвĕн мониторингĕ çинчен пĕлтернĕ.

Иртнĕ çулта инспекци адресĕпе граждансем 5 пин ытла çыру янă, çав шутра 30% яхăн – пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн шутласа палăртнă тӳлеве сăлтавланин ыйтăвĕсемпе. Управляющи компанисен ĕçне 600 ытла хутчен тĕрĕсленĕ, вĕсен пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх республикăра пурăнакан 47200 çын тĕлĕшпе тӳлеве çĕнĕрен шутласа палăртнă, 2 млн та 650 пин тенкĕлĕх сахалрах тӳлемелле тунă.

«Текстильщик» управляющи компани», «Вертикаль» ОООсене, «Кăмăл» акционерсен обществин должноçри çыннине пĕтĕмпе 250 пин тенкĕлĕх штрафланă.

Патшалăх конкуренци политики тата тарифсен енĕпе ĕçлекен служба ертӳçи Альбина Егорова каланă тăрăх – çирĕплетнĕ хаксемпе тĕрĕс усă курнине, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеве шутласа палăртмалли йĕркесене пăхăннине тĕрĕслеме республикăри 367 адрес тата 84 управляющи компани тăрăх пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлеме панă квитанцисене кашни уйăхрах тишкернĕ. Çакна палăртнă: 2013 çулăн пĕрремĕш çурринче граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлесси ӳсмен, 2012 çулхи раштав уйăхĕнчи шайрах юлнă, утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тӳлеве Раççей Федерацийĕн Правительстви палăртнă виçесемпе улăштарнă.

ЧР Пуçлăхĕ управляющи компани ертӳçисен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕшĕн яваплă пулмаллине палăртнă. Çапах та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тытăмĕнче йĕрке тума влаç тăрăшни çеç çителĕксĕр. Нумай хваттерлĕ çуртсенчи хваттер харпăрлăхçисен хăйсен те ĕç кăтартăвĕсемшĕн управляющи компанисенчен çирĕпрех ыйтмалла. Анчах та паян çулталăкри отчет пухăвĕсене нумай хваттерлĕ çуртсенче ячĕшĕн кăна ирттереççĕ.

ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Степанов 2013 çулта регионсенчи авиавĕçевсене аталантармалли «пилот» проекта еплерех пурнăçлани, 2014 çулхи тĕллевсем çинчен каласа панă. Шупашкар-Ĕпхӳ-Шупашкар тата Шупашкар-Самар-Шупашкар маршрутсем тăрăх авиавĕçевсем йĕркеленĕ.

Шупашкар-Ĕпхӳ-Шупашкар маршрутпа авиавĕçевсем 2013 çулхи çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче пуçланнă, 54 рейс тунă, 167 пассажир ыйтăвне тивĕçтернĕ. Шупашкар-Самар-Шупашкар маршрутпа авиавĕçевсем юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче пуçланнă, 66 рейс тунă, 137 пассажира каймалли çĕре илсе çитернĕ.

2014 çулта Шупашкар-Самар, Шупашкар-Ĕпхӳ маршрутсемпе эрнере 3-шер рейс тума палăртнă, «АК БАРС АЭРО» акционерсен обществин самолечĕсемпе усă курĕç. 2014 çулта регионсенчи авиавĕçевсене аталантармалли проект тăрăх Чăваш Енре 3 пин пассажира палăртнă вырăна илсе çитерме пăхнă. Авиаперевозчика 2014 çулта Чăваш Республикин бюджетĕнчен пама уйăракан субсиди виçи 8,48 млн тенкĕпе танлашĕ.

■ **А.ЛЬВОВА**

*Уяв*

# «Эсир тĕрĕс çулпа пыракансем»





***Пичет кунĕ хаçат-журнал, кĕнеке кăларакансемпе полиграфистсен уявĕ çеç мар. Вăл – радиоитлевçĕсен, телекуравçăсен, хаçат вулавçисен, штатра тăман авторсен праçникĕ те. Эпир – пĕр пысăк çемье, пысăк пĕр ĕç тăватпăр: хамăрăн историе çырса пыратпăр. Чăваш журналисчĕсен мăнаçланмалли те, хăпартланмалли те пур. Кăрлачăн 18-мĕшĕнче К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи театрĕнче Раççей тата Чăваш пичечĕн кунĕсене халалланă савăнăçлă мероприятие 350 ытла хăна пухăнчĕ. Журналистсемпе полиграфистсене, пичет ĕçĕн ветеранĕсене професси уявĕпе республика ертӳлĕхĕ, Чăваш Ен министерстви-ведомстви, предприятисен ертӳçисем саламларĕç.***

Театр фойинче массăлла информаци хатĕрĕсенче, издательствăсемпе телекоммуникаци предприятийĕсенче вăй хуракансем хăйсен ĕç-хĕлĕпе паллаштаракан курав йĕркеленĕ. «Тивĕçлĕ, аван выставка»,– терĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев унпа паллашнă май. Чăваш наци телекуравĕн стенчĕ патĕнче Михаил Васильевич калемçăсене уяв ячĕпе тӳрĕ эфирта саламларĕ. Кунтах кăмăл тăвакансене хаçатсен çĕнĕ номерĕсемпе, хăнасене сăн ӳкерттерсе çийĕнчех пичетленĕ кăларăмсемпе тивĕçтерчĕç. Куравра Олимп çулăмĕпе сăн ӳкерĕнме те, çĕнĕ кĕнекесемпе паллашма та, цифрăллă телекурав çинчен пĕлме те май пулчĕ.

ЧР информаци политикин министрĕ Валентина Андреева 2013 çулта тунă ĕç-хĕле пĕтĕмлетрĕ. Пĕлтĕрхи çул МИХ ĕçченĕсемшĕн ăнăçлă пулнине палăртрĕ вăл. «Советская Чувашия» хаçат, «Грани» Издательство çурчĕ тата Чăваш кĕнеке издательстви Федерацин пичет тата массăллă коммуникацисен агентствин гранчĕсене илнĕ. Чăваш Енри республика, район тата хула хаçачĕсем /пурĕ вуннăн/ «Прессăн ылтăн фончĕ» палла тивĕçнĕ. 2013 çулхи тепĕр çитĕнӳ – раштавăн 17-мĕшĕнче «Тăван радио» эфира тухни. Пысăк тепĕр пулăм – «Хыпар» Издательство çурчĕн никĕсĕ çинче медиахолдинг йĕркеленни. Унăн çемйинче халĕ 16 чăваш кăларăмĕ. «Эсир – вулакан, куракан, итлекен кăмăлне витĕм кӳме пултаракан çынсем. Эсирех çитменлĕхсене палăртса хăюллă утăм тăвакансем. Аналитиксем те. Хавшак енсене асăнатăр çеç мар, тĕрĕс çул-йĕрне те кăтартатăр. Сире пурсăра та професси шайĕ пысăк пулнăшăн, ĕçе парăнса, юратса пурнăçланăшăн тав тăватăп. Пултарулăхра çĕнĕ çитĕнӳсем, телей, çирĕп сывлăх сунатăп», – терĕ Валентина Владимировна.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – журналист – хăйне евĕр, çав вăхăтрах çăмăл мар професси. Эсир хăвăрăн тивĕçе туллин пурнăçлатăр. Республика пурнăçне туллин, тĕрĕс çутататăр. Тăван çĕре юратнăшăн, вышкайсăр ĕçĕршĕн, сывă пурнăç йĕркине сарассишĕн çине тăрса ĕçленĕшĕн тав тăватăп. Кирлĕ чухне критиклĕр. Тĕрĕс, тивĕçлĕ критика кăлтăксене пĕтерме, ӳсме пулăшать. Пресс-конференцисенче, интервью панă чухне эпĕ журналистсен пур ыйтăвне те хуравлатăп. Тавтапуç сире тӳрĕлĕхшĕн тата тĕрĕслĕхшĕн», – терĕ Михаил Васильевич.

Уявра чи пултаруллисемпе пуçаруллисем патшалăх наградисене тивĕçрĕç. «Ĕç ялавĕ» хаçатăн /Етĕрне районĕ/ реклама менеджерне Фаина Михайловăна Чăваш Республикин Хисеп хучĕпе чысларĕç. «Грани» Издательство çурчĕн информаци пайĕн редакторне Алексей Мигунова, Чăваш наци телерадиокомпани директорĕн çумне Юлия Стройковăна, «Чăваш Ен» телерадиокомпанин информаци программисен службин пуçлăхĕн çумне Лидия Петрейкинăна «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят пачĕç. Чăваш наци телекуравĕн информаци программисен редакцийĕн пай ертӳçине Елена Гальперинăна вара республика Пуçлăхĕн Тав çырăвĕпе тата алла çыхмалли сехетпе чысларĕç. Отрасльти ветерансене те манмарĕç. Журналистикăра 70 çул вăй хунă, Раççей Журналисчĕсен союзĕнче çур ĕмĕр тăракан Петр Гурьевич Кольцова Михаил Игнатьев Тав çырăвĕ пачĕ, аллине сехет çыхса ячĕ.

Уява пухăннисене çавăн пекех РФ Патшалăх Думин депутачĕ Анатолий Аксаков, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Олег Мешков саламларĕç.

● 2 стр. ➡

## Михаил Игнатьев Анатолий Аксаковпа тĕл пулнă

Кăрлачăн 20-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин Финанс рынокĕ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумĕпе Анатолий Аксаковпа ĕçлĕ тĕл пулнă.

Чăваш Енре экономика проекчĕсене пурнăçлас, çавăн пекех республикăра инфратытăм проекчĕсене ĕçе кĕртес сферăна Раççей Регион банкĕсен пĕрлĕхне явăçтарас, патшалăхпа уйрăм çын пĕрле тумалли мелсене аталантарас малашлăха сӳтсе явнă.

**А.ВАСИЛЬЕВА.**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Культура çулталăкне – çĕнетнĕ клубпа

***Етĕрне тăрăхĕнче Культура çулталăкĕ Лапракассинчи çĕнетсе юсанă культурăпа кану центрне уçнипе пуçланнă.***

Çав ятпа йĕркеленĕ савăнăçлă уява Етĕрне район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Кузьмин, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Алиса Иванова, Хучаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Святослав Кузьмин хутшăннă. Вĕсем ялти культура вучахне тата вăйлăрах аталанма ырă суннă.

Асăннă клубра курав залне, декорацисен складне çĕнетнĕ, çĕнĕ оборудовани, музыка инструменчĕсем, компьютер техники, сцена çине тухмалли костюмсем туяннă. Лапракассинче халĕ «Латус» юрăпа ташă ансамблĕ, хор, икĕ фольклор, хореографи тата театр ушкăнĕсем пур. Вĕсене 180 çын çӳрет. Уява «Вирьял», «Латус», «Хунав», «Хавал», «Шанчăк», «Салам» ансамбльсем хăйсен юрри-кĕввипе пуянлатнă. Ентешĕсене К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн артисчĕ Петр Садовников «Шăнкăрав курăкĕ» юрăпа саламланă.

**А.ГРОМОВА.**

### «Атăлçи тĕл пулăвĕсем»

***Çакнашкал ятпа «Росинка» физкультурăпа сывлăх центрĕнче çамрăк журналистсен Пĕтĕм Раççейри фестивалĕ иртнĕ. Чăваш Ене çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен 27 ушкăн килсе çитнĕ.***

РФ çамрăк журналистсен лиги, «Юнпресс» пултарулăх агентстви тата «Бумеранг» форум йĕркеленĕ фестиваль мероприятисемпе пуян пулнă: конкурссем, ăсталăх сехечĕсем, пултарулăх ĕçĕсем... Ачасене Пĕрремĕш канал ертӳçи Михаил Верещагин калаçу енĕпе ирттернĕ занятийĕ тата интервью уйрăмах килĕшнĕ. Çавăн пекех ытти паллă журналистсен ăсталăх сехечĕсем кăсăклă иртнĕ. Кишиневран килнĕ психолог тата тренер М.Паскаль яшсемпе хĕрсене тĕрлĕ вăййапа савăнтарнă. Хăнасене чăваш халăхĕн вăййисемпе те паллаштарнă. Фестиваль вăхăтĕнче çамрăк корреспондентсем палăртнă темăпа хаçатсем кăларнă, теледневниксемпе кинофильмсем хатĕрленĕ. Кашни кунах вĕсем видеоматериалсемпе пичет кăларăмĕсене тишкернĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Биатлонçăсен – 6 медаль

***Чăваш Ен биатлонçисем Ижевскра иртнĕ федерацин Атăлçи округĕн чемпионатĕнчен медальсемпе таврăннă.***

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчех Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕсем виçĕ медаль çĕнсе илнĕ. Спринтерсен тупăшăвĕнче спортăн тĕнче класлă мастерĕ Вячеслав Акимов пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă, 20-ри Станислав Григорьев дистанцие виççĕмĕш вĕçленĕ. Универсиада чемпионки Татьяна Семенова (тренерĕ Анатолий Акимов) хĕрарăмсен ушкăнĕнче иккĕмĕш кăтартупа палăрнă. Чемпионатăн юлашки кунĕнче чăваш спортсменĕсем тепĕр çитĕнӳпе савăнтарчĕç: Вячеслав Акимовпа Татьяна Семенова массăллă стартра пухмача «кĕмĕлпе» пуянлатнă. Пĕлтĕр те пултаруллă хĕрпе каччă Атăлçи округĕн ăмăртăвĕнче 4 медальлĕ пулнăччĕ. Çамрăк биатлонçăсем вара Саранскра вăй виçнĕ. Унта та пирĕн ентешсене ăнăçнă. РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Геральд Салдимиров патĕнче ăсталăха туптакан Алексей Иванов яшсен хушшинче «бронза» çĕнсе илнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

*Пулăм*

# Кĕтнĕ вăхăт тинех çитрĕ



***Кăрлачăн 17-мĕшĕнче эрне кун Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче Чăваш Енре Культура çулталăкĕ уçăлнă май савăнăçлă мероприяти иртрĕ. Пысăк çак пулăма республика культура ĕçченĕсем тĕплĕн хатĕрленнĕ: театрăн иккĕмĕш хутĕнчи фойере курав экспозицийĕсем хатĕрленĕ, презентацисем йĕркеленĕ. Кунтах – ăсталăх класĕсем те, авалхи йăла-йĕркепе çыхăннă пĕр-пĕр уяв саманчĕ те. Акă, Шупашкарти ӳнер училищин вĕренекенĕсем тăмран пĕчĕк чӳлмек, ваза ăсталаççĕ. Çак ĕçпе кăсăкланакан чылай, чуна илĕртекен япаласем мĕнле «çуралнине» сывламасăр тенĕ пек сăнаса тăраççĕ. Музыка училищин студенчĕсем вара чăваш туйне чун кĕртесшĕн. Пĕркенчĕкпе витĕннĕ пике те, унăн пулас мăшăрĕ те, туй халăхĕ те – пĕтĕмпех – чăн чăвашла тăхăннă.***

Архив ĕçченĕсем те пушă алăпа килмен. Электрон тата кинодокументаци архивĕ Иоаким Максимов-Кошкинский ӳкернĕ илемлĕ фильма телевизорпа кăтартрĕ. Акă экран çинче – Тани Юн. Çак самантра вăл пирĕнпе пĕрле тейĕн.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов та çак пуянлăхпа, еткерпе паллашрĕç, унтан курав залне кĕчĕç.

Сцена çинчи ятарласа хатĕрленĕ экран республикăн культура пурнăçне çутатса парать. Çак тапхăрта савăнтаракан самант чылай пулнă. Культура çулталăкĕнчен тата пысăк хăвăртлăхпа сулмаклă ĕçсем кĕтетпĕр.

Уяв ертӳçисем сцена çине Михаил Игнатьева чĕнсе хăпартрĕç.

Михаил Васильевич пухăннисене паллă пулăмпа саламланă май çак шухăша палăртрĕ: «Культура çулталăкĕ чăннипех çутлăх çулталăкĕ пуласса шанатăп. Чăваш халăхĕ авалтанпах тĕлĕнмелле пуян культурине, йăли-йĕркине куç пек упранă, ăруран-ăрăва парса пынă. Чăваш Енĕн пултаруллă çыннисен – Петр Егоровăн, Иван Яковлевăн, Константин Ивановăн, Надежда Павловăн, Геннадий Айхин тата ыттисен те – ячĕсем тĕнче культурин историйĕнче çырăнса юлнă. Çак ятсем тата çĕнĕ талантсемпе пуянланчĕç, вĕсем юратнă Чăваш Ене, Раççее чапа кăларчĕç. «Культура» ăнлав – нумай енлĕ, вăл хутшăнусен пур тытăмĕпе те çыхăннă. Çавăнпа та Культура çулталăкĕнче пирĕн искусствăн, литературăн, музыкăн, живописĕн чи çӳллĕ енĕсем пирки çеç мар, хутшăну культури, ĕç тата производство культури çинчен те калаçмалла».

● ➡ 3 стр.

### Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил анăçран çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, каçхине 18 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 761 мм, сывлăшри нӳрĕк 84 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 54 минут.**

# «Эсир тĕрĕс çулпа пыракансем»



• «Хыпар» операторне Лидия Шумовăна – Хисеп хучĕ.



• Альбина Волкова оператор та Хисеп хутне тивĕçнĕ.

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Чăваш Ен Журналистсен союзĕн председателĕ Валерий Комиссаров 2013 çулта пултарулăх конкурсĕнче çĕнтернĕ журналистсене саламларĕ. Елена Зайцевăпа /«Советская Чувашия»/ Ольга Туркай /«Чăваш Ен» патшалăх телекуравпа радиохыпарлав компанийĕ/ – Çемен Элкер премийĕн 2013 çулхи лауреачĕсем. Л.Ильин ячĕллĕ премие вара Юрий Михайловпа /«Хыпар»/ Лилия Петрова /Етĕрне район администрацийĕн тĕп специалисчĕ/ тивĕçрĕç.

Пичет тата вăрçă ветеранне, СССР Журналисчĕсен союзĕн членне, «Каçал ен» тата «Хыпар» хаçатсен общество корреспондентне Ревокат Моисеева – «Халăх корреспонденчĕ», «Порецкие вести» /Пăрачкав районĕ/ хаçата – «Пысăк тиражлă хаçат», «Вперед» /Çĕмĕрле районĕ/ хаçата – «Электронлă çырăнтару», «Грани» хаçата /Çĕнĕ Шупашкар/ – «Социаллă карттă», «Советская Чувашия» хаçата – «Аталану стратегийĕ – ĕçлĕ çул-йĕр», И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенткине Сильвия Петровăна «Чăваш мулкачĕ» Дипломсемпе чысларĕç. Уява республикăри пултарулăхăн паллă ушкăнсен юрри-ташши пуянлатрĕ. Эх, мăнтарăн журналисчĕ, чылай чухне унăн кану, уяв кунĕсенче те ĕçлеме тивет. Республикăри телекурав ĕçченĕсем ав уяв репортажĕ хатĕрлерĕç, мана вара материал çырма тӳр килчĕ. Çапла пĕтĕмлетес килет: журналистикăра ăнсăртран лекнĕ çын çук. Эпир пулас профессие ачаранах суйланă, мĕн пур пулăма, хыпара чун витĕр кăларатпăр, уççăн, тӳррĕн çыратпăр. Юлашкинчен ĕçтешĕмсене – РФ Çыхăну тата массăллă коммуникацисен министерствин Хисеп хутне тивĕçнĕ Лидия Шумова калăплавça, Альбина Волкова оператора, ЧР Патшалăх Канашĕн Тав çырăвне илнĕ Дмитрий Моисеева /«Çамрăксен хаçачĕн» редакторĕ/ чун-чĕререн саламлатпăр, ĕçре тата та пысăк çитĕнӳсем сунатпăр.

■ **Роза ВЛАСОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем



• Л.Ильин премийĕн çĕнĕ лауреачĕ – Юрий Михайлов /сулахайри/.



• Дмитрий Моисеева – ЧР Патшалăх Канашĕн Тав çырăвĕ.

# ВУЛАКАН ЫЙТАТЬ, СĔНЕТ, АСĂРХАТТАРАТЬ

*Ахрăм*

## «Эффективлă мар» тени тĕрĕсех-ши?

Аслă вĕренӳ заведенийĕсен ĕçĕ «эффективлă мар» пирки МИХсем пĕрре çеç мар каларĕç, çырчĕç. Раççейре вĕсем темиçе çĕр, пирĕн республикăра вара – виççĕ. «Хыпар» хаçатра, иртнĕ çулхи раштаври пĕр номерте, А.Куприяновăн «Педуниверситет парăнмасть» ятлă статйи пичетленнĕччĕ. Чăваш патшалăх педагогика университечĕ çинчен журналист тĕрĕс çырать. Акă манăн алăра кĕнеке: «Чувашгоспедуниверситет им. И.Я.Яковлева: история, структура, ученые». Ку кĕнекене алла тытса вулама кăмăллă. Унăн авторĕсем йышлă, редакципе издательство канашĕ тухăçлă ĕçленĕ. Вăл ушкăна Г.Н.Григорьев /ун чухне – ректор/ ертсе пынă. Кĕнекене Трактор тăвакансен проспектĕнче вырнаçнă М.Шумилов ячĕллĕ библиотекăран илсе килтĕм. Тухнăранпа пĕр теçетке çул ытларах вăхăт иртнĕ пулин те вăл вĕр çĕнĕ. Страницисем çеç кăштах сарăхнă. Кĕнеке питĕ килĕшрĕ: мĕншĕн тесен ăна вуласан аллă-утмăл çул каялла пулса иртнисем аса килеççĕ. Мĕнле манăн-ха çуралса ӳснĕ тăван тавралăха, хаклă тăвансене, ял-йыша, пускиле? Шупашкар районĕнчи Ункă шывĕ, Ишек тăрăхĕ...

Эпĕ Ишек шкулĕнче иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче вĕреннĕ. Унти вĕрентекенсене яланах ырăпа аса илетĕп. Вăл вăхăтра шкула С.Р.Малютин ертсе пынă, вăл Чăваш патшалăх педагогика институтне пĕтернĕ. Каярахпа Чăваш ял хуçалăх институтĕнче нумай çул ĕçлерĕ, профессор пулчĕ. Чăваш чĕлхипе литературине пире Л.Ф.Тельмова вĕрентрĕ. Вăл та чăваш патшалăх педагогика институтĕнче иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенче ăс пухнă. Кайран направленипе Пушкăрт Республикинче ĕçленĕ. Ун хыççăн Ишек шкулĕнче 42 çул ачасене вĕрентнĕ. Унăн ĕçне правительство «РСФСР халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» хисеплĕ ятпа хакланă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче техникум пĕтернĕ хыççăн пĕр хушă М.К.Енисеевпа ĕçлерĕмĕр. Вăл ун чухне районти халăха вĕрентес ĕç пайне ертсе пыратчĕ. Каярахпа Чăваш педагогика институтĕче нумай çул ĕçлерĕ, педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор пулчĕ.

Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче Чăваш халăх писателĕсем Хĕветĕр Уяр, Николай Терентьев, Михаил Юхма вĕреннĕ. В.Давыдов-Анатри, Александр Алка Чăваш халăх поэчĕсем те унтах пĕлӳ илнĕ. Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятсене 800 çын патнелле тивĕçнĕ.

Çавăнпа та аслă вĕренӳ асăннă заведенийĕ «эффективлă мар» тенипе манăн ниепле те килĕшес килмест. Çӳлерех палăртнă кĕнекене татах та тытса вулас килет. Тен, унтанпа педуниверситет çинчен кĕнекесем татах та тухнă пулĕ – паллашсан аванччĕ.

■ **Михаил КАРПОВ**

# Пирĕн сайтра – «Хыпар» историйĕ, çĕнĕ видеокăларăмсем

***«Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе, историйĕпе кăсăкланакан чăвашсене ырă хыпар пĕлтеретпĕр: паянтан пирĕн сайтăн «Видеохыпарлав» рубрикинче халĕччен архивра упраннă видеосюжетсемпе паллашма пулать. Вĕсене Интернет урлă Раççейре çеç мар, тĕнчен кирек хăш кĕтесĕнче пурăнакансем те курма пултараççĕ.***

«Хыпар»-электрон архивне çакăн пек видеосюжетсем-кăларăмсем вырнаçтарнă:

1996 ç. «Хыпар» хаçат 90 çул тултарнине халалланă уявсем, тĕл пулусем /Шупашкар, Хусан хулисем, Муркаш районĕ/.

1996 ç. «Хыпар» хаçат хăни – Олимп вăййисен чемпионки Валентина Егорова.

1996 ç. кăрлачăн 20-мĕшĕнче «Хыпар» хаçат çумĕнче «Çамрăксен хаçатне» кăларма тытăннине халалланă уяв /1997, нарăс, 7. Красноармейски ялĕ/.

1996 ç. «Хыпарçăсем» – Алманчă /Патăрьел районĕ/ тăрăхĕнче.

«Хыпар» хаçат никĕслевçи Н.В.Никольский 120 çул çитнине Шупашкарта, Хусанта, Муркаш районĕнче уявлани. /1998, çу уйăхĕ/.

1998. «Хыпар» хаçат кунĕсене Елчĕк, Комсомольски, Йĕпреç, Етĕрне районĕсенчеирттерни.

«Хыпарçăсем» Çĕнĕ çула /2000, 2001/ кĕтсе илни.

2001. «Хыпар» хаçат 95 çул тултарнине халалланă уяв.

2001 ç. кăрлач, 21. «Хыпар» – хыпарлать.

2005 ç., пуш уйăхĕ. «Çамрăксен хаçачĕн» уявĕ.

2013 ç. «Тăван Атăл» журнал содержанине лайăхлатас тĕллевпе йĕркеленĕ «çавра сĕтел».

2014, кăрлач, 17. «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ Алексей Леонтьев Чăваш наци радионе Чăваш пичечĕн кунĕ умĕн панă интервью.

2014, кăрлач, 17. «Чăваш пичечĕн кунне çитĕнӳсемпе кĕтсе илетпĕр». «Хыпар» Издательство çурчĕн кăларăмĕсен редакторĕсен сăмахĕ.

Видеоматериалсемпе Интернета çак адреспа кĕрсе паллашăр:

www.hypar.ru

«Видеохыпарлав» рубрика.

# ВХЭÇТ урлă – 77%

***Чăваш Енри вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем 2013 çулхи раштав уйăхĕнче ведомствăсен хушшинчи электрон çыхăну тытăмĕ /ВХЭÇТ/ урлă 3,7 пин ытла ыйту янă. Ку вăл – пĕтĕм запросăн 77%. 2013 çулта республикăн ĕç тăвакан тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенчен ВХЭÇТ урлă федераци влаç органĕсене пĕтĕмпе 94 пин ытла ыйту çитнĕ.***

Çакăн пирки ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерствин информаци технологийĕсене ĕçе кĕртекен уйрăмĕн пуçлăхĕ Ирина Никонорова кăрлач уйăхĕн 16-мĕшĕнче ВХЭÇТ енĕпе черетлĕ хут йĕркеленĕ вĕренӳ семинарĕнче пĕлтернĕ. Унта район-хула администрацийĕсен пуçлăхĕсен çумĕсене тата асăннă тытăмпа усă курассишĕн яваплă ĕçченсене чĕннĕ. Ку хутĕнче вĕсем федераци влаç органĕсем р-сведенисем тăрăх янă запроссене мĕнле хуравламаллине вĕреннĕ. Палăртни вырăнлă: р-сведенисем – федераци влаç органĕсем халăха пулăшу кӳнĕ чухне регионсенчен ыйтса илекен кăтартусем. Чăваш Ен ВХЭÇТра çак кăтартусене тестлассине 2013 çулхи раштав уйăхĕнче вĕçленĕ.

Аса илтеретпĕр: 2012 çулхи утă уйăхĕнчен пуçласа влаç органĕсене халăхран ытти органра пур сведенисене ыйтмашкăн чарнă. Ку информацие регион, федераци тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пĕр-пĕринчен ВХЭÇТ пулăшăвĕпе илмелле. Хăш-пĕр документа çеç, тĕслĕхрен, паспорта, водитель правине – пĕтĕмпе 19 документа – гражданинăн хăйĕн кăтартмалла.

Çак тытăм туллин ĕçлесе кайтăр тесе ЧР Информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви пысăк ĕç пурнăçланă: инструкцисем хатĕрленĕ, ведомствăсен хушшинчи электрон çыхăнăва хутшăнакансем валли ятарлă портал хута янă. Унсăр пуçне министерство вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, ял тăрăхĕсен, социаллă хӳтлĕх уйрăмĕсен, халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсен ĕçченĕсем – пулăшу кӳрекеннисем – валли ВХЭÇТ енĕпе вĕренӳ семинарĕсем ирттерет.

■ **И.БЕЛОВА**

## Америка журналистне пирĕн çĕр-шыва кĕртме чарнă

**Мускавăн Таганка район сучĕ ăнлантарнă тăрăх – Америка журналистне Дэвид Сэттера миграци саккунĕсене пăснăшăн Раççее кĕме чарнă. Çакăн çинчен «Интерфакс» пĕлтернĕ.**

**Судра ăнлантарнă тăрăх – Сэттер ĕçне Федераци миграци службин пуçарăвĕпе пăхса тухнă. Çавăн пекех Сэттера штраф тӳлеттернĕ.**

**Lenta.ru**

*Тĕн*

# Больница çумĕнчи чиркӳ

***Иртнĕ эрнере Час илтекен Турă Амăшĕн турăшĕн чиркĕвĕн /вăл Республика психиатри больницин территорийĕнче вырнаçнă/ тĕп куполне хăпартрĕç. Ăна хăйĕн вырăнне вырнаçтариччен Шупашкар тата Чăваш епархийĕн социаллă ĕçпе чиркӳ ыр кăмăллăхĕн уйрăмĕн ертӳçи Михаил Павлов иерей сăвапларĕ тата молебен ирттерчĕ.***



Ку чиркĕве тăвас шухăш 2005 çултах çуралнă. Психиатри больницин ун чухнехи тĕп врачĕн Александр Козловăн тата Аполинарий Павлов протоиерейăн проект та хатĕр пулнă. Пархатарлă ĕçе тĕрлĕ сăлтава пула каярах хăварма йышăннă, çак тапхăрта ырă ĕмĕтпе çунатланнă çынсем çут тĕнчерен уйрăлнă. 2005 çулхи раштав уйăхĕнче больницăн 4-мĕш хутĕнче Серафим Саровский ячĕллĕ пысăках мар храм уçнă. Чирлĕ çынсем унта çурта çутма, кĕлĕ вулама çӳреççĕ. Шел те, пысăк уявсенче пурте вырнаçаймаççĕ. Çакна шута илсе тата протоиерейăн ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе унăн ывăлĕ Михаил Павлов иерей – вăл епархи уйрăмĕн ертӳçи пулнипе пĕрлех Шупашкарти медицина колледжĕнче ыр кăмăллăх сестрисен уйрăмне ертсе пырать, маларах хăй те тухтăрта ĕçленĕ – психиатри больници çумĕнче чиркӳ тума тĕллев лартнă. 2012 çулхи кĕркунне унăн никĕсне янă. Йывăç чиркĕве тĕне ĕненекенсем, предпринимательсем пухнă укçапа çĕкленĕ. Строительство материалĕсем парса тата ĕçлесе пулăшакансем те пулнă.

– Ку чиркӳ чирлĕ çынсем валли, чи малтанах психиатри больницинче сипленекенсем çӳрĕç кунта. Каярахпа, ĕç-хĕле анлăлатса пынăçемĕн тата Варнава митрополит пил парсан, çывăхри больницăсенчи – туберкулез диспансерĕнчи, Республика клиника больницинчи, Президент перинаталь центрĕнчи, ӳтпе венерологи тата наркологи диспансерĕсенчи – çынсене те тĕрĕс çул çине тăмашкăн тата ытти енĕпе пулăшăпăр. Вĕсем патне халĕ те кайсах çӳретпĕр-ха эпир, çапах чиркӳ ĕçлеме пуçласан тата ытларах тĕл пулăпăр, – терĕ Михаил Павлов иерей. Вăл каланă тăрăх – чиркӳ алăкĕсем канмалли кунсенче çак микрорайонта пурăнакансемшĕн те уçă пулĕç.

Чиркĕве туса пĕтернĕпе пĕрех. Ăна кăçал çуркунне уçма палăртаççĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Курав*

# «Çĕр улми» уява йыхравлать

***Нарăс уйăхĕн 20-21-мĕшĕсенче Шупашкарти Николаев космонавт урамĕнчи суту-илӳ комплексĕнче регионсен хушшинчи «Çĕр улми–2014» курав иртет. Кăçал унăн программи пуян та анлă. Хутшăнакансемшĕн çеç мар, курма пыракансемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ вăл. Экспозицисенче çынсем чикĕ леш енчи тата хамăр çĕр-шыври селекционерсем туса кăларнă çĕр улмин вун-вун сорчĕпе, вĕсен уйрăмлăхĕсемпе çывăхрах паллашаççĕ.***

Уявра ăслăлăх-практика конференцийĕ иртет, «çавра сĕтелсем» ĕçлеççĕ. «Иккĕмĕш çăкăр» туса илес вăрттăнлăха вĕсенче пĕр-пĕрин хушшинче анлăрах сарнă май, хăнасем ку чухнехи сортсем, çĕнĕ технологи тата селекци çитĕнĕвĕ çинчен пуян информаци илеççĕ.

Йĕркелӳ комитечĕн членĕсем Раççей ВТОна кĕнĕ пирки специалистсем отрасль малашне епле аталанассипе çивĕчрех кăсăкланасса шанаççĕ. Продукцие вырнаçтарас енĕпе йывăрлăхсем пулмĕç-ши – чи малтанах акă мĕн интереслентерет вĕсене.

Вăрлăха çухатусăр хĕл каçарас ыйту та канăç памасть. Экспертсемпе тĕпчевçĕсем ăна уçăмлатаççех. Дискуссисене «иккĕмĕш çăкăр» çинчен лайăх пĕлекен профессионалсемпе пĕрле журналистсем те хутшăнаççĕ.

Шупашкара курава килесси çинчен хальлĕхе Раççейĕн 13 регионĕнчен 40 ытла предприяти пĕлтернĕ. Вĕсем – Мускавпа Санкт-Петербург хулисем, Липецк, Мускав, Чул хула, Самар, Свердловск облаçĕсем, Тутар республики, ытти регион та. Предприятисенчен – «Август» фирма», «Сингента», «Агротрейд» компанийĕ» ОООсем, «Колнаг» АХО, ăслăлăх-тĕпчев институчĕсем, ыттисем те.

Курав кунĕсенче йăлана кĕнĕ тăрăх çĕр улмирен хатĕрленĕ вун-вун тĕрлĕ çимĕçе тутанма – ас тивме май пур. Халăх çулленхи пекех паха сортлă вăрлăха хаваспах туянĕ.

Кунтах ачасен чи лайăх ӳкерчĕкĕсемпе алă ĕçĕсен «Эпĕ çĕр улмине юрататăп» конкурсне пĕтĕмлетĕç.

Ăслăлăх-практика конференцийĕн материалĕсен пуххине тата хутшăнакансен каталогне пичетлесе кăларма палăртнă.

■ **В.ГРИГОРЬЕВ**

## Терроризмшăн çул хупă

***Çĕр-шывра терроризмпа экстремизм ыйтăвĕсем çивĕччи куç кĕрет. Чăваш Енре лару-тăру лăпкă пулни ку енĕпе ĕçлемелле маррине пĕлтермест.***

Шупашкар районĕнче те çак ыйтусене куçран вĕçертместпĕр. Координаци тата надзор тивĕçне пурнăçланă май район прокуратури ку енĕпе кирлĕ ĕçе пурнăçлать.

Право хуралĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем, организацисен ертӳçисем терроризмпа тата экстремизпа кĕрешесси çинчен калакан саккунсене мĕнле пурнăçланине пĕлтĕр ятарласа йĕркеленĕ координаци канашлăвĕнче тишкернĕ. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче ирттернĕ тĕрĕслевсен кăтартăвĕсем тăрăх саккуна пăснин икĕ тĕслĕхĕпе представлени çырнă, вĕсене тишкернĕ хыççăн икĕ çынна дисциплина енĕпе явап тыттарнă.

Суда вĕренӳ учрежденийĕн çуртне терроризмран хӳтĕлемелли условисемпе тивĕçтермелли пирки тавăç тăратрăмăр. Суд прокурор ыйтăвне шута илчĕ.

Интернет сетĕнче экстремизм материалĕсем сарнăшăн Кӳкеç çынни тĕлĕшпе КоАПăн 20.29 статйипе адмĕç пуçарнă, материалсене тишкерме район судне ярса панă. Суд айăплăскер тĕлĕшпе административлă яваплăх палăртрĕ – ăна 1 пин тенкĕлĕх штрафларĕ.

**А.МОИСЕЕВ,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕ.**

## Вăрманта – хĕллехи урок

***Улатăр районĕнчи Атрать шкулĕнче кăрлачăн 9-11-мĕшĕсенче çамрăк натуралистсен хĕллехи вĕренĕвĕ иртрĕ.***

Ăна «Сăрçи» заповедник сотрудникĕсем йĕркелерĕç. Пĕрремĕш кун çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан çак лаптăкăн хăйне евĕрлĕхĕпе, унти чĕр чунсемпе, ӳсен-тăранпа паллаштарчĕç. Иккĕмĕш кун ачасене пилĕк ушкăна пайларĕç те хăтлăхăн районти лаптăкне илсе кайрĕç, кашнине уйрăм ĕç пачĕç. Пĕрремĕш ушкăн видеоаппаратсемпе çул çӳреве ӳкерсе пычĕ. Иккĕмĕшĕ – вĕçен кайăксене, виççĕмĕшĕ тĕрлĕ йывăçа шута илчĕ. Тăваттăмĕшĕ юр çинчи йĕрсене пĕр-пĕринчен уйăрса чĕр чунсене палăртрĕ. Пиллĕкмĕшĕ чăтлăхра тĕл пулнă вĕçен кайăксем пек сас кăларма хăнăхрĕ.

Кайран куçан-çӳрен йĕрне тишкерме пурте пĕр вырăна пухăнчĕç. Пăшин вăл тарăнрах, пысăкрах. Хир сысни чĕрнисем шĕвĕртерех. Юр çинче урисем тарăн путаççĕ. Чăтлăхран шкула таврăнсан мĕн курнине сӳтсе яврĕç, çĕнни çинчен тетраде çырса хучĕç. Пирĕн ĕçченсем вĕренекенсемпе вăйă вылярĕç. Кунта ачасене тимлĕх, чĕр чун тĕнчипе çыхăннă пĕлӳ кирлĕ пулчĕ.

Шкулта çамрăк натуралистсен кружокне йĕркелерĕç, унăн ертӳçине суйларĕç. Заповедник ĕçченĕсем чи хастар вĕренекенсене парне пачĕç.

**Людмила МАЙОРОВА,**
**«Сăрçи» заповедник методисчĕ.**

*Шухăш*

## Начаррине илтсе хăлха ан йӳçтĕр

Пултарулăх çыннисем пĕр-пĕрне ура хума хăтланнине пурнăçра пĕрре мар тĕл пулатăн. Халĕ ирĕклĕх саманинче пурăнатпăр та – кирек кама та критиклеме хăятпăр мар-и? Хăш-пĕр чухне – тăр ахалех. Телевизорпа кăтартакан ток-шоусенче пĕр-пĕрне «ăса вĕрентесси» тавлашу-кăшкăрашу патнех çитет те – урăх каналти кăларăмсене пăхма тытăнатăп.

Хамăра эпир, чăвашсем, сăпайлă халăх теме хăнăхнă-ха – пурнăçра аплах мар çав. Акă пĕр тĕслĕх. Республикăра паянхи кун – çыравçăсен виçĕ союзĕ. Кашни пĕрлĕхрех талантлă, чунне парса пултарулăхне аталантаракан çынсем пурах ĕнтĕ – иккĕленӳ çук. Çапах та кашни пĕрлĕхрех хăйсен ушкăнне мала хуракансем тупăнаççĕ. Тепĕр ушкăнрине эх! тиркеççĕ вара çавнашкал çынсем. Хăйсене Çĕр кăвапи вырăнне хураççĕ-ши? Тавлашса-пайласа-питлесе вăхăт ирттериччен çĕнĕ хайлав, халĕччен хускатманнине, çырасчĕ. Пĕлĕшĕм каласа кăтартрĕ: пĕррехинче «çавра сĕтеле» хутшăннăскер вĕсне çити ларса çитереймен – çыравçăсен тавлашăвне итлесе хăлхи йӳçнĕ.

Кăçал Раççейре – Культура çулталăкĕ. Кăшт хамăра стайлăрах тытма, килпетлĕрех пулма тăрăшасчĕ. Çулталăк тăршшĕнче республикăна тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнчен такам та килĕ – пире курса пирĕн халăх пирки мĕнлерех шухăш çирĕпленĕ вĕсен? Ырă пĕтĕмлетӳсем ытларах пулччăрах.

■ **Василий МАКСИМОВ**

## Чăваш купăсçисене курасчĕ

Ĕçлĕ çын шăмат куна чăтăмсăррăн кĕтет. Пĕрисем мунча хутса хурăн милĕкпе çапăнса рехетленесшĕн. Теприсем тăван ялне васкаççĕ. Тустăванпа кĕрекене ларма ĕмĕтленекенсем те эрне вĕçне кĕтеççĕ.

Маншăн та, ватă çыншăн, шăмат кун – чăн праçник. Мунча, вĕри кукăль техĕмне ас тивиччен, йăлана кĕнĕ йĕркепе, телевизор умне ирхине меллĕ вырнаçса ларатăп. Геннадий Заволокин проекчĕпе унăн ывăлĕпе хĕрĕ хатĕрлекен «Играй, гармонь, любимая» кăларăма курма çав тери кăмăллатăп. Ăна пăхнă хыççăн асамлă вăй-хăват кĕнĕнех туятăп. Эпир ӳснĕ вăхăтра хут купăссăр пуçне нимĕнле кĕвĕ хатĕрĕ те пулман. Çавăнпах-тăр купăс сасси паян та маншăн – чун хавалĕ.

Асăннă передачăна курнă май ăçти тăрăхра, хăш хула-ялта кăна «пулмарăм-ши»? Шел, ӳкерекен ушкăн Чăваш Ене килнине хальлĕхе кураймарăм. Эпир пултарулăх енчен ытти халăхран кая мар-çке. Пĕрремĕш каналпа кăтартакан телекăларăма хутшăнма тивĕçлĕ мар-им?

Куславкка районĕнче – ял тăрăхĕн тăхăр администрацийĕ. Кашнинче информаципе культура центрĕ пур. Вĕсенче пултарулăх ушкăнĕ е фольклор ансамблĕ ĕçлет. Вĕсен ертӳçисен хушшинче Раççей е Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем пуррипе мухтанма пултаратпăр.

Çĕр пин юрă çĕр-шывĕ тетпĕр эпир Чăваш Ен пирки. Геннадий Заволокин пек ăста купăсçă чăвашсен те пулнă-çке: Петр Шоркин. Унăн тĕслĕхĕпе хавхаланакансем халĕ те пур-ха пирĕн хутлăхра. Вĕсем валли Раççей телекуравĕнче кăвак хуппи хăçан уçăлĕ-ши? Ăнланатăп: пĕр-пĕр проекта хутшăнасси укçатенкĕпе çыхăннă. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев культурăна упрассишĕн тăрăшни аванах туйăнать. Эппин, шанăç пурах-тăр.

■ **Николай ФЕДОТОВ.**

Куславкка районĕ,
Тĕрлемес

*Кулленхи пурнăç*

## Кивĕ тараса улталать

«Хыпар» хаçата тĕрлĕ ыйтупа çыракан чылай. Çынсен нуши-савăнăçĕпе паллашсах тăратпăр-ха. Халĕ акă хамăрăн та алла ручка тытмалла пулчĕ. Чунри тарăхăва сирме, тен, çăмăлрах пулĕ.

Муркаш районĕнчи Юнкă ялĕнче пурăнатăп. Ял çынни вырăнти лавккара апат-çимĕç, хуçалăхра кирлĕ тĕрлĕ япала туянать. Шел, виçтерсе илмелли çимĕçе туяннă хыççăн кашнинчех кăмăл юлать. Лавккара халĕ те тахçанхи тарасапа ĕçлеççĕ. Вăл вара чĕтренсе çеç тăрать. Пĕррехинче кăлпасси виçтерме тăрсан сутуçă хăй те тарăхса кайрĕ: «Ĕмĕрхи хатĕртен хăçан хăпăпăр-ши?» – терĕ. Çакăн пирки Мăн Сĕнтĕрти райпо хуçисем мĕн шухăшлаççĕ-ши? Лавккапа юнашарах – кафе. Унта та çавнашкал кивĕ тарасапах ĕçлеççĕ. Тупăш илекен тытăмра /суту-илӳ самаях аван пырать вĕт/ чи кирлĕ хатĕрпе тивĕçтермелĕх укçа çук-шим? Пирĕн ял лавккинче электрон тараса пулсанах райпо пуçлăхне Майкова юлташа Юнкăри пĕтĕм çын тав сăмахĕ калĕ. Анчах çав куна мĕн чухлĕ кĕтмелле-ши?

■ **В.АНДРЕЕВА**

Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.





Ятарлă кăларăм

# КУЛЬТУРА



*Пулăм*

## Кĕтнĕ вăхăт тинех çитрĕ

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.



Михаил Игнатьев çавăн пекех республикăра тĕпленсе пурăнакан 128 халăх çыннипе 8 этника ушкăнĕ хушшинче килĕшӳпе çураçу хуçаланнине, çакă Чăваш Ене, çавăн пекех Раççее те, малалла та тăнăçлă аталанма майсем туса парасса палăртрĕ.

Унтан республика Пуçлăхĕ отрасльте нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене патшалăх наградисемпе чысларĕ. Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн балет артисчĕ Айдар Хисамутдинов «Чăваш халăх артисчĕ» ята тивĕçрĕ. «ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ята çаксене пачĕ: Михаил Дмитриева /Красноармейски районĕ/, Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищин преподавательне Ирина Никитинăна, Зоя Спиридоновăна /Хĕрлĕ Чутай районĕ/, Альбина Алексеевăна /ЧР культура министрĕн пĕрремĕш çумĕ/.

Михаил Васильевич çавăн пекех пултаруллă çамрăксен пысăк ушкăнне Чăваш Республикин Пуçлăхĕн ятарлă стипендине тивĕçнисене ĕнентерекен свидетельствăсем пачĕ.

2013 çулхи чӳк уйăхĕнче ЧР Культура министерстви Культура çулталăкĕн эмблемин эскизне хатĕрлес тĕлĕшпе конкурс йĕркеленĕ. Комисси Красноармейски районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи информаципе культура центрĕнчи Александр Казаков художник-оформителĕн ĕçне ырласа йышăннă. Республика ертӳçи Александр Анатольевича асăнмалăх статуэтка парнелерĕ.

Уяв концерчĕ чăннипех çӳллĕ шайра иртрĕ. Концерта «Çавал» фольклор ансамблĕ уçрĕ. Асăннă коллектив пирки, акă, мĕн палăртса хăвармалла: вăл кĕçех Сочире уçăлакан Хĕллехи XXII Олимпиадăн культура программине чăваш юрри-кĕввипе пуянлатĕ.

РФ Правительствин Патшалăх премийĕн «Раççей чунĕ» лауреачĕсем, Раççей тата Чăваш Ен культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем Зинаида Козлова ертсе пыракан «Уяв» тата «Юрай» коллективсем, çавăн пекех Анатолий Музыкантовăн «Суварпа» «Суварята» ташă ушкăнĕсем, халăх музыкин «Раштав», «Çеçпĕл» вокал ансамблĕсем чăваш, ытти халăх культурипе, йăли-йĕркипе паллаштарчĕç.

Сцена çине искусство ăстисем те тухрĕç: Ж.Бизе, Ж.Оффенбах, М.Глинка произведенийĕсем те янăрарĕç.

Уява уçма хутшăннисен шухăш-кăмăлне те пĕлес килчĕ.

**Любовь Константинова, Элĕк районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи культура керменĕн ертсе пыракан методисчĕ:**

– Культура тытăмĕнче 40 çул ытла ĕçлетĕп. Çак саманта культура ĕçченĕсем тахçантанпах кĕтнĕ. Хăй вăхăтĕнче асăннă отрасль патшалăх шайĕпе пурнăça кĕрекен «Вĕренӳ», «Сывлăх сыхлавĕ» тата ытти наци программи пекех тивĕçлĕ вырăн тупасса шаннăччĕ. Ун чухне ĕмĕтĕмĕр пурнăça кĕреймерĕ. Юлашки вăхăтра республикăра ял культурине çĕклес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттереççĕ: тĕслĕх клубсем йĕркелеççĕ, Çавна май вĕсен пурлăх никĕсĕ те самай пуянланать.

**Лидия Филиппова, Элĕк районĕнчи ял тăрăхĕсен хушшинчи культура керменĕнчи «Валинке» халăх фольклор коллективĕн ертӳçи:**

– Культура çулталăкĕнче эпир те тĕллевлĕ ĕçлĕпĕр. Çывăх вăхăтра пурнăça кĕртмелли проектсенчен пĕри – «Пĕчĕк çеç путене» фестиваль тĕлне çăпата ташшине хатĕрлесе çитересси. Халĕ хĕрӳ ĕç пырать: аслă ăрурисем те, ачасен студине çӳрекенсем те çăпата тăватпăр.

**Людмила Данькова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Хуракассинчи культура çурчĕн директорĕ:**



ЧР Культура министерстви сайтĕнчи сăн ӳкерчĕксем.

– Ял тăрăхĕнче ирттерекен мероприятисене пĕтĕмпех Культура çулталăкне халаллăпăр. Иртнĕ çул Нарат Чаккинчи клуба газпа ăшăтма пуçланă. Кăçал унта юсав ĕçĕсем тăвасшăн. Кунти хор чăмăртаннăранпа 90 çул çитет. Ăна район шайĕпе уявлас тетпĕр.

Ман килте «Мире кĕтекен çурт» музей ĕçлет. Унта чăваш йăли-йĕркипе çыхăннă авалхи япаласем упранаççĕ. Иртнĕ çул 352 çын пырса курчĕ. Наци телекуравĕ хăйĕн «Ылтăн çӳпçе» передачисене музей никĕсĕ çинче йĕркелесе пычĕ. Йăла-йĕркене кăтартма «Шăнкăрав» ушкăн пулăшрĕ.

**Лариса Казначеева, Елчĕк районĕнчи Вăрăмхăвари культура çурчĕн ертӳçи:**

– Вулавăшра та, клубра та пĕччененех ĕçлетĕп. Çапла 14 çул ĕнтĕ. Малтан ялта специалист çуккипе, халĕ – саманине кура.

Ял Тутарстан чиккинче, тĕрĕссипе, унăн ăшĕнче, ларать. Шкула хупрĕç, ачасем, çамрăксем çук тесе каламан пулăттăм. Халĕ кунти 30 ача районти тата Тутарстанри тăватă шкула çӳрет.

Хăй вăхăтĕнче вулавăшпа çавăн пек лару-тăру сиксе тухас хăрушлăх пурччĕ. Эпир вара тĕслĕх библиотека йĕркелесе яма, клуба районта чи малтан çут çанталăк газĕпе хутса ăшăтма пуçларăмăр.

Ялта 300 яхăн çын пурăнать. Культура ĕçченĕ пĕччен çеç пулсан та чылай мероприяти ирттерме май килчĕ. Пĕлтĕр районти конкурссемпе фестивальсенче 9 диплом илнĕ. Драма кружокне çӳрекенсем /аслисем – «Çăл куçа», шкул ачисем – «Илемпие»/ уйрăмах савăнтараççĕ. Темиçе çул каялла «Илемпи» «Театр тĕнчи» республика конкурсĕнче пĕрремĕш вырăна тухнăччĕ, пĕлтĕр районта палăртăмăр.

2013 çулта бюджет тулашĕнчи укçа-тенкĕпе аппаратура туянтăмăр.

Культура çулталăкĕнчи ĕмĕт-тĕллев те пысăк. Вĕсенчен пĕри – тăван яла никĕсленĕренпе 200 çул çитнине тивĕçлĕ шайра уявласси.

■ **Надежда СМИРНОВА**

*Пултарулăх*

## Юррисемпе пулăшать

***Культура тытăмĕнче хăйĕн ĕçне чунран парăннă çынсем çеç ĕçлеççĕ тенипе килĕшетĕп. Статистика палăртнă тăрăх – шăпах вĕсен шалăвĕ чи пĕчĕккисен шутĕнче. Сăмахран, 2013 çулта республикăри культура учрежденийĕсенчи вăтам ĕç укçи 11774 тенкĕпе танлашнă, муниципалитет шайĕнчисен – 9985 тенкĕ. Тăвай районĕнче вара, тĕслĕхрен, çак кăтарту 8561 тенкĕпе тан.***

Лару-тăрупа тĕплĕнрех паллашас тĕллевпе вырăна çитсе килтĕмĕр. Район пысăках мар, пурĕ те 29 ял кăна. Кунти культурăпа кану учрежденийĕсем /26/, 18 вулавăш, «халăх» ята тивĕçнĕ 2 музей тата 5 коллектив муниципалитет шайĕнчи культурăн бюджет тытса тăракан 12 учреждени тытăмĕнче тăраççĕ. Хальхи вăхăтра унта 106 çын ĕçлет, 29-шĕ – техника персоналĕ.

Район администрацийĕн социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Наталья Чайкина хăй ертсе пыракан тытăмри ĕç-хĕлпе паллаштарчĕ. Тĕрĕссипе, культура ыйтăвĕпе çеç мар, спорт, çамрăксен политики енĕпе те ĕçлеме тивет асăннă пайăн. Наталья Юрьевна палăртнă тăрăх – культура ĕçченĕсене нихăçан та çăмăл пулман. Юлашки çулсенче ку енĕпе патшалăх шайĕпе витĕмлĕ ĕçлеме тытăнни, «çул-йĕр картти» туса хуни яваплăха татах пысăклатма хистенĕ. Иртнĕ çул отрасльте ĕç укçине виçĕ хутчен ӳстернĕ, вăл 6910 тенкĕрен /2012 çулта/ 8561 тенке çитнĕ. Çапах та çакă та тивĕçтермест. Йывăр лару-тăруран тухма пулать-и? Пур çĕрти пекех кунта та оптимизаци мелĕсемпе усă курнă, штатсене май килнĕ таран «кĕскетнĕ». Наталья Юрьевна шанăça çухатмасть. Культура ĕçченĕсенчен хăйсенчен те нумай килет тет: ĕç укçине ӳстерме бюджет тулашĕнчи çăл куçпа та усă курма чармаççĕ. Мĕнле тупмалла-ха хушма тупăша? Хăйсен ĕçлесе илмелле. Çапла тăваççĕ те. Акă 2012 çулта районти культура учрежденийĕсем 213500 тенкĕ тупăш илнĕ тĕк, пĕлтĕр – 337800 тенкĕ. Тухăçлă контракт тытăмне вăя кĕртесси пирки те систерчĕ Наталья Чайкина. Мĕне пĕлтерет-ха çакă? Палăртнă тĕллевсене пурнăçламасан культура ĕçченĕ тивĕçлĕ шалăва илеймĕ.

Культура çулталăкĕнчи тĕллевсем мĕнлерех-ха Тăвайсен? Паянхи кун районта тĕслĕх шайри культура учрежденийĕсем тăваттă: Çĕнĕ Пуянкасси, Тăрмăш, Йăнтăрччă ялĕсенчи информаципе культура центрĕсем тата ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрĕ. Иртнĕ çул çавăн пекех район центрĕнчи халăх музейне тĕпрен юсама май килнĕ. Кăçалхи тĕллевсем те пысăк: Мучар тата Тĕмер клубĕсене комплекслă çурт-йĕр программине хутшăнса çĕнетесшĕн тата икĕ клуба тĕслĕх шая çĕклесшĕн. Раççей Культура министерствин грантне тивĕçес тĕллевпе проект хатĕрлесшĕн. Пĕлтĕр çак майпа Енĕш Нăрвашсем 100 пин тенкĕ илнĕ. Çав укçапа халăх пултарулăх коллективĕ валли костюм çĕлеттернĕ тата сасă оборудованийĕ туяннă.

Тăвай тăрăхĕ пултаруллă çынсемпе пуян. Артистсем те, композиторсем те, ал ĕç ăстисем те пур. Малашне те çаплах пулĕ, мĕншĕн тесен вĕсен тĕслĕхне ăша хывса çитĕнеççĕ паянхи ачасем. Вĕсене культура ĕçченĕсем, библиотекарьсем пулăшса пыраççĕ. Наталья Юрьевна темиçе тĕслĕх илсе кăтартрĕ. Акă Уракассинчи пĕчĕк клубри Татьяна Григорьева администратор тата çур ставкăллă Валентина Григорьева библиотекарь пысăк центрсенчисемпе танах ĕçлеççĕмĕн. Клубра пултарулăх коллективĕ те, халăх кăмăлласа çӳрекен кружоксемпе секцисем те пур.

Эпир Енĕш Нăрвашри информаципе культура центрне çитсе килтĕмĕр, унти халăх театрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрăмăр. Зоя Васильева режиссер пирки вулавçăсене каласа кăтартмалли сахал мар. Çак ялтах кун çути курнă вăл. Юратнă ентешĕ, СССР халăх артистки Вера Кузьмина тĕслĕхĕпе мĕн ачаран сцена çине тухма ĕмĕтленнĕ. Культурăпа çут ĕç училищинче массăллă мероприятисен режиссури енĕпе пĕлӳ илнĕ, 1990-1996 çулсенче ялти библиотека ертӳçи пулнă. Хусан патшалăх культурăпа искусство академине пĕтернĕ. Ун хыççăн культура çурчĕн пултарулăх ертӳçинче ĕçленĕ. 2008 çултанпа халăх театрне ертсе пырать.

Зоя Ивановна хăйĕн шăпине ялпа мар, хулапа çыхăнтарма пулсан пулĕ, тен, тата ăнăçлăрах та килсе тухатчĕ-и? Пĕррехинче, хăй кĕвĕлесе юрлакан юрăсене Чăваш радио фончĕ валли çыртарнă чухне ăна Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблне ĕçлеме те чĕннĕ. Анчах карьера мар, çемье тĕп вырăнта уншăн. Мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ пирки шухăшланă вăл халăх юрăçи. Сар кайăк пек сасă, хӳхĕм чечек пек илемлĕскерĕн пĕр вăхăт Мускаври стройкăра арматурщицăра та нушаланма тивнĕ. Культурăра ытла та йывăр пулнă вăхăтпа çыхăннă çак самант, ачасене ӳстерме, пĕлӳ пама вара укçа-тенкĕ сахал мар кирлĕ вĕт. Халĕ вĕсем ура çине тăнă ĕнтĕ, хĕрĕ качча тухса икĕ мăнук парнеленĕ. Паян Зоя Ивановна пĕтĕмпех ĕçе, пултарулăха «чăмнă». Хĕрĕх çул каялла йĕркелесе янă драма кружокĕн кун-çулĕ пирки кăсăкланса каласа кăтартрĕ. Хăй пекех хастар Николай Шутов пуçарăвĕпе чăмăртаннă иккен вăл. 1987 çулхи пуш уйăхĕн вĕçĕнче «Кай, кай Ивана» спектаклĕпе «халăх театрĕ» ята хӳтĕленĕ. Николай Андреевич паян çак çутă тĕнчере çук ĕнтĕ, анчах вăл хывнă çул татăлман, унăн ячĕ манăçман. Енĕш Нăрваш халăх театрĕ иртнĕ çул хăйĕн сумлă ятне çĕнĕрен чыслăн хӳтĕленĕ. «Яланах театр» республика фестиваль-конкурсĕнче икĕ номинацире çĕнтернĕ. Пĕри – «Хăй çырнă чи лайăх спектакль», тепри – «Чи лайăх драматург». Мĕн тетĕр? Пьеса авторĕ те Зоя Васильева хăех. Халăх театрĕсем валли тивĕçлĕ хайлавсем çукки алла калем тытма хистенĕ ăна. Мĕн çинчен çырмалли пирки пуçа ватма кирлех мар тет вăл. Йĕри-тавра тинкерсе пăхмалла çеç. Темăсем – пирĕн хушăмăртах. «Пенси укçи мыскарин» никĕсĕнче те ялти тĕслĕхсемех. Кăçал сцена çине кăларма палăртнă «Каçар мана, аппаçăм» пьеса авторĕ те Зоя Ивановнах. 2012-2013 театр сезонĕнче çак ĕçсемпе куравçăсене савăнтарнă: «Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ» /Н.Айзман/, «Виç хĕрарăм пĕр пасар» /А.Сухан/, «Телейлĕ кăмпа» /Л.Сарине/, «Чăх чĕппи – чемпион» /В.Николаев/. Унсăр пуçне темиçе инсценировкăпа, «Кай, кай Ивана», «Хавруç инке чирленĕ», «Хуняма», «Шăпа», «Вĕрентеççĕ арăмсем» спектакльсен сыпăкĕсемпе паллаштарнă.



● *Зоя Васильева.*

Ял çыннисем куравçăсем çеç мар, артистсем те. Халăх театрне вун-вун çул çӳрекен чылай кунта. Сăмахран, Юрий тата Майя Аристовсем, Зинаида Семенова, Валентина Кошкина, Светлана Данилова, Зоя Герасимова, Галина Гаврилова, Галина Сергеева, Владимир Петров спектакльсене хутшăнассине хăйсен тивĕçĕ пек йышăнаççĕ. Çамрăксене те кăсăклантарма пултарать Зоя Васильева режиссер. Татьяна Пурш, Валентина Степанова, Вячеславпа Владимир Ефимовсем, Сергей Зобов кăмăллă хушма ĕçшĕн. Ачасем пирки те манмаççĕ. Çитĕнекен ăру валли халăх театрĕ çумĕнчи «Путене» ушкăн юмахсем, ăс паракан пĕчĕк спектакльсем хатĕрлет. Хăшĕсем аслисем лартакан ĕçсене те хутшăнаççĕ.

Зоя Ивановна информаципе культура центрĕ çумĕнчи ытти ĕçе те хастар хутшăнать. Çирĕм çул каялла хăй йĕркелесе янă «Саймал» ансамбль валли юрăсем çырать, «Пучах» агитбригадăна ертсе пырать. «Килтĕм, килтĕм хăнана» юррине районта çеç мар, республикăри юратса шăрантараççĕ. Ку çеç-и, Мускавра та янăрана вăл. Тĕслĕхрен, иртнĕ çул çĕр-шыв тĕп хулинче иртнĕ «Чунга-Чунга» Пĕтĕм тĕнчери фестивалĕн финал концертĕнче Çĕмĕрлери ачасен пĕрремĕш искусство шкулĕнче вĕренекен Александра Афошина шăпах Зоя Ивановнăн асăннă юррине юрланă. Çавна май фестиваль президентĕн Юрий Энтинăн Тав çырăвĕ Енĕш Нăрваша та çитнĕ.

Юрăмсемпе ял-йыша пулăшас, халăх кăмăлне çĕклес килет тет шăпчăк сассиллĕ юрăç.

■ **Надежда СМИРНОВА**



●*Халăх театрне ачасем те кăмăллаççĕ.*

**Кăларăма Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

*Çутă сăнар*

## «Кашниншĕн чунĕ ыратать»

***Валерий Александровича И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ ӳнерпе музыка факультечĕн иккĕмĕш корпусĕнче тĕл пултăм. Вăл яланхи пекех студентсен хушшинче, вĕсене диплом ĕçĕ хатĕрлеме пулăшать. Çамрăксем ăна тĕрĕслĕхе тĕпе хурса çирĕп ыйтнăшăн хисеплеççĕ. «Унăн кашниншĕн чунĕ ыратать», – теççĕ студентсем.***

Валерий Чеботкина тахçанах пĕлетĕп. Унăн пултарулăхĕпе куравсенче темиçе хутчен те паллашнă, кĕнекисене те вуланă. Чăннипех те талантлă художник, пултаруллă педагог, пысăк чунлă çын. Живопиç хайлавĕ-и, ăслăлăх ĕçĕ-и, вĕренӳ пособийĕ-и – мĕн пур ĕçе вăл пĕлĕвне, ăс-хакăлне, кăмăл-туйăмне шеллемесĕр пурнăçлать. Раççей Художниксен союзĕн членĕ, А.В.Григорьев ячĕллĕ Мари патшалăх премийĕн лауреачĕ, Мари Республикин тава тивĕçлĕ художникĕ, Раççей ӳнер академийĕн дипломне тивĕçнĕ... Типĕ çак йĕркесен хыçĕнче искусствăна парăннă çыннăн пуян кун-çулĕ пытаннă.



Валерий Йошкар-Олара пултарулăх çыннисен çемйинче çуралса ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ «Мари Эл» ансамбльте ĕçленĕ. Хăй каланă тăрăх – балета, халăх ташшисене юратма вăл ашшĕнчен вĕреннĕ, музыка, опера искусствине амăшĕ хыççăн туртăнма пуçланă. Ача чухнех Валерий пурнăç тыткăчи ăсталăх пуласси не ăнланса илнĕ. Йошкар-Олари ӳнер училищине пĕтернĕ хыççăн Ленинградри И.Е.Репин ячĕллĕ живопиç, скульптура тата архитектура институтне вĕренме кĕнĕ. «Декабристсен мăшăрĕсене халалланă» диплом ĕçĕшĕн ăна СССР Культура министерствин ылтăн медалĕпе чысланă.

Валерий пурнăçĕнчи курăмлă тепĕр тапхăр – Раççей ӳнер академийĕн живопиç мастерскойĕнче СССР халăх художникĕ Х.Якупов патĕнче ăсталăхне туптанă çулсем. Хыççăн Йошкар-Олари ӳнер училищинче преподавательте, директорта ĕçленĕ. Республикăн культура тата ӳнер пурнăçне хастар хутшăннă.

Валерий Чеботкин тĕрлĕ жанрпа – натюрморт, пейзаж, портрет... – ĕçлет. Раççей, тĕнче шайĕнчи вун-вун курава хутшăннă. «Декабристсем», «Ирина Алферова актриса», «Иеромонах портречĕ» тата ытти картинине Нью-Йоркра, Прагăра, Хусанта, Чул хулара, Саранскра, Волгоградра, Самарта, Мускавра, Краснодарта, Парижра, Стамбулта аван пĕлеççĕ. Ĕçĕсем Раççейри, АПШри, Францири, Польшăри, Алжирти, Китайри музейсенче, уйрăм çынсем патĕнче упранаççĕ.

Валерий Александрович 2005 çултанпа Шупашкарта педуниверситетра вĕрентет. Вăл – живопиç кафедрин доценчĕ, лекцисем вулать, аслă курс студенчĕсемпе практика занятийĕсем ирттерет. Вĕсене хăйсем суйласа илнĕ профессие юратма хăнăхтарать, çамрăксен ăс-хакăлне пуянлатма, тавра курăмне анлăлатма пулăшать. Ӳнер педагогикин ыйтăвĕсемпе ăслăлăх статйисем, кĕнекесем çырать.

■ **Людмила КУТЬИНА**

*Кĕске хыпарсем*

## Ленинград блокадине халалланă

Наци библиотекин гуманитари ăслăлăхĕсен пайĕнче Ленинграда нимĕç фашисчĕсен блокадинчен ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитнине халалланă кĕнекепе иллюстраци куравĕ уçăлнă.

Хула 900 кун калама çук йывăр условисенче пурăннă, кĕрешнĕ. Ленинград блокади – Тĕнчен иккĕмĕш вăрçин чи тискер те хăрушă страници. А.Буровăн «Блокада: день за днем», И.Мощанскин «У стен Ленинграда», Ф.Ланнуан «Битва за Ленинград, 1941, 22 июня – 31 декабря» кĕнекисенче тата ытти кăларăмра тискер çав кунсене ĕненмелле çырса кăтартнă.

Кунтах Ольга Берггольцăн блокадăри Ленинградра çуралнă кĕнеки. Унăн «Никама та манман, нимĕн те манăçман» йĕркисем Пискарев асăну масарĕн граничĕ çине çырăннă.

Живопиç, скульптура, графика ăстисен хайлавĕсем хула çыннисен паттăрлăхне вилĕмсĕрлетнĕ. Çакскерсенчен куравра А.Пахомовăн, В.Серовăн, Б.Угаровăн иллюстраци альбомĕсемпе паллашма пулать.

## Тата тепĕр фестиваль

Шупашкарта бард юррисен фестивалĕ ирттересси йăлана кĕнĕ. Кăçал та пулĕ вăл. Нарăсăн 8-9-мĕшĕсенче тĕп хулари Трактор тăвакансен культура керменĕнче çĕр-шывăн тĕрлĕ регионĕнчи бард юррисен авторĕсемпе вĕсене шăрантаракансем пухăнĕç.

Фестиваль йĕркелӳçисем – бард юррисен республикăри «Чĕрĕ хĕлĕх» клубĕ, Культура программисен республика дирекцийĕ тата тĕп хула администрацийĕн культура управленийĕ.

## Вулавăш ĕçченĕсемпе тĕл пулнă

Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев тата культурăпа архив ĕçĕн пай пуçлăхĕ Елена Чернова районти ял тăрăхĕсен хушшинчи тĕп библиотекăра пулнă. Кунта 24 пин кĕнеке упранать. Вулавăш ял тăрăхĕсен хушшинчи культурăпа кану центрĕн çуртĕнче вырнаçнă. Библиотекарьсене те, культура çурчĕн ĕçченĕсене те çурта юсаса çĕнетес ыйту канăçсăрлантарать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн шухăшĕпе – кивĕ çурта тĕпрен юсама кирлех те мар, çĕннине туни чылай перекетлĕрех. Ыйтăва çитес вăхăтрах районти Депутатсен пухăвĕнче сӳтсе явма палăртнă. Халăх пултарулăх коллективĕсен тумне çĕнетме те шантарнă.

■ **Н.ГЕОРГИЕВА**

*Ахрăм*

## Эпир çырни – халăха упраниех

***«Хыпарта» /2013, раштав, 10, 234№/ «Литература кăларăмĕсем тавра» статьяна тимлĕн вуларăм.***

Пĕтĕмпех тĕрĕс калаççĕ çыравçăсем: халăх поэчĕ-писателĕ, ят илнĕ критик. Анчах, манăн шухăшăмпа, иртнĕ саманари шухăшлавпа калаçатпăр. Эпĕ хам та иртнĕ самана çынни, кунта çырни те çав шайрах. Кĕнекене 150 экземплярпа презентацишĕн çеç çырнăн туйăнать текен те пур. Эпĕ уйрăм çын издательствинче хам терменпе 150, 100, 50 экземплярпа темиçе кĕнеке кăлартăм. Татах 50 экз. тиражпа пĕрин хыççăн теприне пичетлеме хатĕрлетĕп. Презентацишĕн-и? Çырнине упраса хăварма! Хама çывăх вулакансене, библиотекăсене парнелеме.

Иртнĕ саманара кĕнеке кăларасси епле пулнине эпĕ «Çыру мехелĕ» повеçре çырса кăтартрăм. Тиражĕ /ан тĕлĕнĕр!/ – 50 экз.

Хальхи вăхăтра литература мĕнле лару-тăрăва кĕрсе ӳкни çинчен Раççей Президенчĕ В.В.Путин çĕр-шыври писательсемпе тĕл пулнă чух уççăн каларĕ. Эсир çырни чĕлхемĕре, эппин, халăхăмăра, упраниех терĕ. Маншăн çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.

■ **Никита ЛАРИОНОВ.**

Элĕк районĕ

